# ЮХАН ШМУУЛ

*Эстони*

## МАЙ ҪИТРӖ

Йӑлӑнтармӑш апрель уяр марччӗ,
Ҫут хӗвел те сайра — тӑтӑш мар —
Сывлӑм шывӗ пек ҫеҫ курӑнатчӗ
Ҫеҫкесем хушшинче тумламшар.

Халӗ шурлӑхсене те Май ҫитрӗ,
Тӗтрене хуса ячӗ инҫе.
Кӑнтӑртан кайӑксем вӗҫсе иртрӗҫ,
Ян та ян утравсем ҫийӗнче.

Тинӗс хумӗ ҫӗкленчӗ хавассӑн,
Ир-ирех ҫырана вӑл ҫапать.
Сар хӗвел, хирсене ҫутатсассӑн,
Час ҫулла пуласса шантарать.

Шурă каç тапхăрне çывăхартнăн
Тунсăхпа эп кётеп Май каçне.
Ман чĕрем ялкăшать шĕл кăваррăн,
Юрлама та шепрех çуркунне.

1948